чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

206/26612/ № Юн кун, 2014, юпа (октябрь), 15 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Республикăн чи лайăх вĕрентекенĕсем хутшăнĕç

***Пĕтĕм Раççей халăх фрончĕ /ПРХФ/ юпа уйăхĕн 14-15-мĕшĕсенче Пензăра "Пахалăхлă вĕрентӳ – çĕр-шывшăн" форум ирттерет. Педагогăн социаллă миссине кăтартас тĕллевпе çакнашкал тĕл пулу йĕркелес шухăша Владимир Путин та ырланă.***

Асăннă мероприятие Чăваш Енрен сумлă делегаци хутшăнать. Унăн йышĕнче – Шупашкарти электромеханика колледжĕн директорĕ Алексей Судленков, Элĕк вăтам шкулĕн директорĕ Владислав Волков, МАДИ республикăри филиалĕн ертӳçин çумĕ Виталий Михайлов, Çĕнĕ Шупашкарти 18-мĕш лицей вĕрентекенĕ Людмила Турковская, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ ăслăлăхпа тĕпчев центрĕн пуçлăхĕн çумĕ Ирина Ершова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ доценчĕ Алексей Карпов, Экономикăпа технологи колледжĕн директорĕн çумĕ Никита Бурашников тата ЧЭАЗ АХО персонал директорĕ Сергей Кольцов.

Промышленноç предприятийĕн элчи ушкăна ăнсăртран лекмен: республикăри паллă предприятин ĕçченĕ инженерипе техника кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе усăлăха ӳстермелли сĕнӳсем парĕ.

– Форумра Раççейри вĕренӳ аталанăвĕн паянхи тăрăмне тĕплĕн уçса парасса шанатпăр, – ĕçлĕ çул çӳрев умĕн хăйĕн шухăшне палăртрĕ Алексей Судленков. – Чи кирли – обществăна, влаçа, бизнеса асăннă тытăмăн çивĕч ыйтăвĕсене татса памашкăн хутшăнтарасси.

■ **Влада МИРСКАЯ**

## «Кулибинсенчен» кам маттур?

***"Трактор завочĕсем" концерн, Раççейри Машина тăвакансен пĕрлĕхĕ, ЧР Ял хуçалăх министерстви тата Хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсене, ытти техникăна тĕрĕслекен патшалăх инспекцийĕ пулăшнипе Шупашкарта 4-мĕш хут иртнĕ "XXI ĕмĕрти Кулибин" курав-конкурса пĕтĕмлетнĕ.***

Унта Мари Республикинчен – Алексейпе Сергей Беляевсем, Чул хула облаçĕнчен Валерий Родионовпа Сергей Алатин пуçласа хутшăннă.

20 ăслайçă хушшинче тĕп хулари механика-технологи техникумĕнчи студентсемпе Трактор историйĕн музейĕ çумĕнчи "Кулибин мастерскойĕ" кружока çӳрекенсем те пур.

ЧР Хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсене, ытти техникăна тĕрĕслекен патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ Владимир Димитриев палăртнă тăрăх – Чăваш Енре харпăр хăй тунă 173 техника хатĕрĕпе усă кураççĕ.

Конкурс 2 номинаципе иртнĕ: "Трактор техники", "Ял хуçалăх машинисем тата ĕç хатĕрĕсем". Пĕрремĕшĕнче Валерий Терентьев /Элĕк районĕ/ çĕнтернĕ. Иккĕмĕшĕнче чи пултаруллине палăртман. Петр Архипов /Канаш районĕ/ Гран-прие тата хаклă парнене тивĕçнĕ.

Петр Архипов "МИПИ" /"Мастерская им. Петра Ивановича"/ трактора хăй пухнă тимĕр-тăмăртан чун кĕртнĕ. Вăл автомобиль кузовĕсене нумай çул юсаса пысăк опыт пухнă. Кивĕ комбайнпа микроавтобусăн, ГАЗ-51 грузовикăн саппас пайĕсем йăлтах хута кайнă. Техника заводра туса кăларнă пекех илемлĕ. Унпа кран пек те усă курать.

■ **Г.ИВАНОВ**

## Пĕр-пĕрин опычĕпе паллашнă

***Чăваш Республикинчи Хĕрарăмсен канашĕн председателĕ Ольга Зайцева /сăн ӳкерчĕкре – сылтăмра/ "Граждансен хастарлăхĕн шкулĕ" семинара, регионсенчи уйрăмсен хастарĕсене лидер пулма хатĕрлес тĕллевпе йĕркеленĕскере, хутшăннă.***



Раççейри Хĕрарăмсен канашĕн тĕп мероприятийĕсен планне кĕртнĕ курс Мускавра юпа уйăхĕн 7-9-мĕшĕсенче иртнĕ.

Курсра çавăн пекех Крым Республикинче тата Севастопольте çĕнĕрен йĕркеленнĕ канашсен хастарĕсем, Раççей регионĕсенчи уйрăмсен председателĕсем пулнă. Вĕсем лекцисем итленĕ, семинар занятийĕсене, тренингсене хутшăннă, анкета ыйтăвĕсене хуравланă, пĕр-пĕрне проектсемпе программăсене патшалăх гранчĕсем пулăшнипе пурнăçланас тĕлĕшпе пухнă опытпа паллаштарнă.

Конференцире Ольга Зайцева Хĕрарăмсен канашĕ тата Чăваш Республикин влаç органĕсем социаллă пĕлтерĕшлĕ проектсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пĕрле тăвакан ĕç-хĕл çинчен каласа кăтартнă.

**О.ПЕТРОВ.**

ЧЫСЛАВ

# «Пире тата нумай çĕнтерӳ кĕтет»

Шупашкар 2014

## Форума лайăх ирттерме пулăшнăшăн – наградăсем



***Ĕнер Шупашкар хула администрацийĕн пысăк залĕнче "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" Пĕтĕм тĕнчери форума йĕркелесе ирттерме пулăшнă пултаруллă та хастар çынсене – депутатсене, финанс партнерĕсене, подрядчиксене, организацисен, суту-илӳ предприятийĕсен /хăна çурчĕсемпе ресторансен/ ертӳçисене, паллă спортсменсене, рекламăпа хастар ĕçлекенсене, ГТО нормативне пурнăçлама, "çăлтăрпа" ирхи зарядка тума хастар хутшăнакансене чысларĕç: Хисеп хучĕсемпе Тав çырăвĕсем, парне-сувенир пачĕç.***

Чыслава Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков хутшăнчĕç. Вĕсем пухăннисене пуçаруллă та хастар ĕçшĕн тав турĕç, малашне те пысăк çитĕнӳсем тума ăнăçу сунчĕç.

"Пĕтĕм тĕнчери спорт форумĕ иртрĕ. Мĕн палăртнине пурнăçларăмăр. Ырă ĕç тăвас терĕмĕр – турăмăр! Хăнасем пурте кăмăллă пулнине пĕлтерчĕç. Эпир, чăвашсем, хăнасене тараватлă та ăшпиллĕ кĕтсе илме пултаратпăр. Анчах çакна бизнес элитисĕр тума йывăр. Спорт форумне "5" тата хушас паллипе хаклама пулать. Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче çанталăк та хитре тăчĕ, вăл та пирĕн ырă ĕçшĕн савăнчĕ тейĕн. Раççей Президенчĕ Владимир Путин Чăваш Ене çĕр каçмаллах килчĕ. Владимир Владимирович Раççейре пурăнакансене юратать. Çĕнĕ Шупашкарта вăл машинăна чартарчĕ те хула çыннисемпе калаçма тухрĕ. Халăх ăна хаваслă, тараватлă, йăл кулăпа кĕтсе илчĕ. "Мĕн тери ырă çынсем", – кăмăллă юлчĕ Владимир Путин. Çакнашкал самантсем малалла ĕçлеме хавхалантараççĕ. "Çĕнĕ хула" проектпа та паллашрĕ вăл. Пур çĕрте те тасалăх хуçаланни тĕлĕнтерчĕ Президента. "Кĕркунне хуçаланать, сирĕн вара йывăççем айĕнче çулçăсем те çук!" – терĕ вăл. Çĕнĕ Шупашкара хăтлăх, таса та тирпейлĕ тăвас тесе хула ертӳлĕхĕ те, çыннисем те нумай ĕçленĕ. Ĕнер Мускавра пултăм. Республика ертӳлĕхĕ, Правительстви, çыннисен ячĕпе ырă сăмах чылай илтрĕм. Эпир палăртнă тĕллевĕмĕрсене пурнăçларăмăр, Путин шанăçне тӳрре кăлартăмăр. Тайма пуç сире, ĕçтешĕмĕрсем, туссем!"– терĕ Михаил Васильевич. Леонид Черкесовпа Алексей Ладыков та пухăннисене чĕререн тав турĕç.

"Кăçал Шупашкарта нумай мероприяти иртрĕ. Хула кунне палăртрăмăр. Халĕ ав спорт форумĕ пулчĕ. Республика Пуçлăхĕ спорт мероприятийĕсене ытларах та ытларах халăха явăçтармалли пирки калать. Предприятисемпе организацисенче ĕçлекенсем хутшăнмасăр вĕсене ирттерме çук. Мĕн ĕмĕтленнине эпир пĕрле йăлтах турăмăр. Пире тата нумай çĕнтерӳ кĕтет", – терĕ Алесей Ладыков. Сăмах май, Алексей Ладыков "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ" хисеплĕ ята тивĕçрĕ. Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн социаллă ыйтусемпе ĕçлекен çумне Алла Салаевăна вара "Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орденпа чысларĕç. Предприятисемпе организацисен ертӳçисене Чăваш Республикин Хисеп хучĕпе, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвĕсемпе, Шупашкар хула Пухăвĕн депутачĕсен, Шупашкар хула администрацийĕн Хисеп хучĕсемпе чысларĕç. Çавăн пекех ĕнерех "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне хастар хутшăннисене Я.Ухсай ячĕллĕ культура керменĕнче тата "Mega Calaxy" кану центрĕнче саламланă.

■ **Роза ВЛАСОВА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

## Министерство ылтăн медале тивĕçнĕ

Мускавра, Пĕтĕм Раççейри курав центрĕнче, "Ылтăн кĕркунне-2014" курав вун улттăмĕш хут иртнĕ. Унта Чăваш Ен делегацийĕ те хутшăннă. ЧР Ял хуçалăх министерстви "Ĕç пуçлакан фермерсене пулăшас тĕлĕшпе палăртнă тĕллевсене ăнăçлă пурнăçланăшăн" конкурсра /ăна Раççей Ял хуçалăх министерствипе "Пĕтĕм Раççейĕн халăх хуçалăхĕн çитĕнĕвĕсен куравĕ" АО йĕркеленĕ/ ылтăн медале тата I степень Диплома тивĕçнĕ. Ведомство 2012-2014 çулсенче ĕç пуçаракан 152 фермера – 191 млн, 16 çемье фермине 91 млн тенкĕ уйăрассипе çыхăннă ыйтусене вăхăтра татса парса самаях пулăшнă.

Çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен, вăл шутра пирĕн республикăран, пухăннă организацисем хăйсен экспозицийĕсене курав центрĕнче йĕркеленĕ "Ылтăн кĕркунне-2014" выставкăра кăтартнă. Юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче "Çĕр улми тата пахча çимĕç туса илесси" конференци пулнă. Унăн ĕçне ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ Алексей Самаркин тата "Агро-Инноваци-сем" ХУП директорĕ Николай Васильев хутшăннă.

"Крокус Экспо" центрта "Агросалон" курав кăçалхипе пиллĕкмĕш хут ĕçленĕ. Унта 29 патшалăхран пухăннă 558 экспонент техникăн 700 ытла хатĕрне кăтартнă. Вĕсемпе Патăрьел районĕнчи "Батыревский", Канаш тăрăхĕнчи Киров ячĕллĕ, Муркаш енри "Путь Ильича" хуçалăхсен инженерĕсем, Шупашкар районĕнчи Ленин ячĕллĕ ЯХПК председателĕ Петр Тунгулов – республикăри 31 специалист – кăсăкланса паллашнă. Çак кунсенче куравра наградăсем çĕнсе илнисене пĕлĕпĕр.

■ **Ю.МИХАЙЛОВ**

**«Хыпар» Издательство çурчĕн» кăларăмĕсене 2015 çулăн I çурри валли Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ. «Хыпар» – 732,66. «Хыпар – шăмат кун» – 304,08.**

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26, 28-82-91

## Пархатарлă ĕçе кӳлĕнчĕç

***Вăрнар районĕн тĕп больницин коллективĕ çамрăк тухтăрсемпе пуянланчĕ. Вăрнар поселокĕнче çуралса ӳснĕ Жанна Карпова тата Дмитрий Николаев аслă пĕлӳ илсен тăван тăрăхах таврăннă, кунта чирлисене сиплесшĕн вĕсем.***



Çак ятпа больницăра уяв йĕкреленĕ. Çамрăк специалистсем аслă ӳсĕмри ĕçтешĕсемпе пĕрле йăлана кĕнĕ йĕркепе Çамрăк тухтăр аллейинче йывăççем лартнă. Унтан вĕсене учреждени ертӳçи Николай Тинюков тĕп тухтăр саламланă: "Медицинăра хăйсен ĕçне юратакан, çирĕп кăмăллă çынсем çеç ĕçлеме пултараççĕ. Пирĕн тухтăрсен хушшинче ăнсăртран лекнисем çуккине ĕненетĕп. Ăс-хакăла пуянлатса, пултарулăха аталантарса пырăр!"

Уява юрă-ташă, тĕрлĕ конкурс, кулăш пуянлатрĕ. Унтан чи пăлхануллă самант çитрĕ. Шурă халат тăхăннă çамрăк тухтăрсем парахтарлă ĕçе кӳлĕннине çирĕплетсе алă пусрĕç. Тĕп тухтăр çумĕ Надежда Николаева çамрăк специалистсене парнесемпе чысларĕ. "Хăвăр суйланă профессие юратăр, пĕлĕве ӳстерсех пырăр, чирлисем хисеплекен тухтăр пулăр. Çак кун сирĕн асра ĕмĕрлĕх юласса шанатăп", – терĕ вăл.

**И.СЕРГЕЕВА.**

## Пирĕн хĕрсен – "бронза"

***Китайри Наньнинь хулинче спорт гимнастики енĕпе тĕнче чемпионачĕ иртнĕ. Унта Чăваш Ен спортсменĕсем те пысăк çитĕнӳпе палăрнă.***



Чемпионатра çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командинчи пикесене уйрăмах ăннă: вĕсем ушкăнсен тупăшăвĕнче 171,462 балл пухса бронза медаль çĕнсе илнĕ. Хĕрсен йышĕнче Чăваш патшалăх университечĕн студентки Полина Федорова та пулнă. Сумлă наградăна Çĕнĕ Шупашкарта çурласа ӳснĕ, халĕ Мускавра пурăнакан Дарья Спиридонова та тивĕçнĕ. Пирĕн ентеш турнирта пухмача тепĕр медальпе те пуянлатнă: пĕрене çинче хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарса виççĕмĕш вырăн йышăннă. "Ку "бронза" пирĕн хĕрсемшĕн "ылтăнпа" танах, мĕншĕн тесен вĕсенчен пиллĕкĕшĕ тĕнче чемпионатне пĕрремĕш хут хушăнаççĕ", – пĕлтернĕ командăн аслă тренерĕ Валентина Родионенко ăмăрту хыççăн. Чăваш Республикин чысне ăмăртура Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 6-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптакан РФ спорт мастерĕ Владислав Поляшов та хӳтĕленĕ. Анчах каччăсен команди пиллĕкмĕш кăтартупа кăна палăрнă.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## Ректор приговорĕ паллă

***Шупашкарти Ленин районĕн сучĕ И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн 65 çулти экс-ректорĕ Всеволод Агаков тĕлĕшпе приговор палăртнă.***

Суд çирĕплетнĕ тăрăх – ЧПУн медицина факультечĕн доценчĕ Татьяна Агафонкина тата университетăн Патăрьелĕнчи филиалĕн директорĕ Людмила Лялина ют пурлăха вăрлас тĕллевпе университетăн икĕ служба хваттерне саккуна пăсса хăйсен харпăрлăхне куçарма тăнă. Çакна пĕлнĕ май Всеволод Агаков ректор тата Алла Иванова проректор вĕсене документсем хатĕрлеме пулăшнă. Харпăрлăха ярса илме тăнă хваттерсен хакĕ 3-шер млн тенкĕ ытла пулнă.

Суд Агафонкинăпа Лялина хăтланăвне уйрăмах пысăк виçепе улталама тăни тесе хакланă, пĕрне – 3 çул та 2 уйăхлăха, теприне 3 çул та 6 уйăхлăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварма, 500-шер пин тенкĕлĕх штрафлама йышăннă. Агаковпа Ивановăна служба вырăнĕпе усă курса уйрăмах пысăк виçепе улталама тăнине пулăшнăшăн айăпланă, 3 çуллăх тĕрĕслев вăхăчĕ палăртса 4 çуллăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă, 600-шер пин тенкĕлĕх штрафланă.

Уголовлă ĕçе Федерацин хăрушсăрлăх службин республикăри управленийĕ тĕпченĕ, Чăваш Ен прокуратури сăнаса тăнă. Приговор вăя кĕмен-ха.

**Н.ЯКОВЛЕВ.**

### Çанталăк çинчен

Паян ăмăр çанталăк пулать, кăштах çумăр çăвать. Çил тухăçран 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 4, çĕрле 2 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 95 процент.

**Кун тăршшĕ 10 сехет те 29 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать, çумăр çăвать. Çил çурçĕрхĕвел тухăçĕнчен 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 1 градус ăшă, çĕрле 0 градус.** Атмосфера пусăмĕ 749 мм, сывлăшри нӳрĕк 97 процент.

**Кун тăршшĕ 10 сехет те 24 минут.**

Хушма кăларăм

# Хӳтлĕх

САМАНА СИНКЕРĔ

# Икке пайланнă кун-çул

## Ачана çăлнă, хăйне упрайман паттăра паян çăмăл мар

***Сусăрсем пирĕнтен, сывă та тĕрĕс-тĕкел çӳрекенсенчен, кăмăл-туйăмпа чылай çирĕпреххине ăсчахсем те, пурнăç та çирĕплетеççĕ. Обществăра ыттисенчен кая маррине ĕнентерес тесе хăйсенчен килнине пурне те тăваççĕ, вăйхала пухса йывăрлăха парăнтараççĕ, малаллах ăнтăлаççĕ, турă панă кун-çулăн кашни самантне хаклама, унпа савăнма пĕлеççĕ. Спортра та хастар вĕсем. Кăçал Сочире иртнĕ хĕллехи Паралимпиадăра инвалидсем тунă çитĕнӳсемпе чăннипех мăнаçлантăмăр.***

***Пирĕн республикăра 90 пин ытла инвалид пурăнать. Вĕсенчен чылайăшĕ обществăра хăйĕн вырăнне тупнă: вăй çитнĕ таран ĕçлет, пултарнă таран вĕренет, шкулта кăна мар, колледж-институтра та.***

### Афган вăрçи авайман, анчах...

...Шурут Нурăсри тантăшĕсенчен нимĕнпех те уйрăлса тăман Толя Пыркин: сумка йăтса шкула чупнă, пушă вăхăтра тусĕсемпе урамра



*Анатолий Пыркин салтакра.*

мечĕк хăвалана. Тата ашшĕ-амăшне пулăшнă. Çемьере çичĕ ывăл çитĕннĕ май Зинаида Емельяновнăн хуçалăхри ĕç-пуçа пĕччен туса пымашкăн кансĕр пулнă паллах. Çавăнпа вĕсем арçын-хĕрарăм ĕçне пайласа тăман: апат пĕçернĕ, урай çунă, ĕне сунă...

Вун сакăр çул тултарсан салтак ячĕ тухнă. Ун чухне, 1986 çулта, Тăван çĕр-шывăмăра сыхлама юрăхлă пулнишĕн сывă та тĕреклĕ яшсем чăннипех мăнаçланнă. Хĕвел тухăç чиккине хураллакан çара лекнĕ Анатолий. 1987 çулхи раштав уйăхĕнче вĕсен чаçне васкавлăн хĕрӳ вырăна – Афганистана – илсе кайнă. Вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнăскер унăн тути-масине лайăх ас тивнĕ: тăшманпа куçа куçăн тăни пĕрре кăна мар пулнă, çур çулта çывăх туссене чылай çухатнă, вĕсене тăван тăрăха цинк тупăкпа ăсатнă. Каччă Афган вăрçине лекнине пиччĕшĕ-шăллĕне ашшĕ-амăшне пĕлтерме хушман, Зинаида Емельяновна çав вăхăтра сыватмăшра йывăр чиртен сипленни



*Тата ... килте.*

ИРТНĔ ĔМĔРĔН 90-МĔШ ÇУЛĔСЕМ ÇĔР-ШЫВĂМĂР ПУРНĂÇНЕ ТĔПРЕН УЛĂШТАРМАН ТĂК АНАТОЛИЙ ПЫРКИНĂН ШĂПИ ТЕ УРĂХЛА ÇАВРĂНСА ТУХНĂ ПУЛĔЧЧĔ-И ТЕН: ХĂЙ ӲСĔМĔНЧИСЕМ ПЕКЕХ ÇЕМЬЕ ÇАВĂРСА АШШĔ-АМĂШНЕ МĂНУКСЕМПЕ САВĂНТАРМАЛЛАЧЧĔ, ВАТĂСЕНЕ ТĔРЕК ПАМАЛЛАЧЧĔ. АНЧАХ...

пирки килтисем те хăйĕн патне хыпар яман.

1988 çулхи çу уйăхĕнче хĕсметрен таврăнсан кăна вăрттăнлăх çăри уçăлнă.

Ют çĕрте çапăçса паттăрлăх кăтартнине «СССР Хĕç-пăшаллă вăйĕсен УПВСĕ – 70 çулта» медаль, Афганистан халăхĕн тавĕ, «Интернационалист воин» паллă тата Тав хучĕсем çирĕплетеççĕ.

Ашшĕ Николай Иванович ăста платник пулнă май, ывăлĕсене каскаламачутлама хăнăхтарнă ахăр. Салтак тумне хывнă каччă тăван хуçалăхра ĕçленĕ. Сăмах май, Шурут шкулне çĕклеме те хутшăннă вăл.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсем çĕр-шывăмăр пурнăçне тĕпрен улăштарман тăк Анатолий Пыркинăн шăпи те урăхла çаврăнса тухнă пулĕччĕ-и тен: хăй ӳсĕмĕнчисем пекех çемье çавăрса ашшĕ-амăшне мăнуксемпе савăнтармаллаччĕ, ватăсене тĕрек памаллаччĕ. Анчах ун чухнехи самана кун-çулне икке – иртнĕ тата малашлăх кунсене – пайланă: пĕрремĕшĕ – тапса тăракан çăл куç шывĕ пек çутă та таса, иккĕмĕшĕ – çул хĕрринче ӳсекен ясмăкăнни евĕр тертлĕ те нушаллă...

Зинаида Емельяновна пĕлтернĕ тăрăх – пурнăç тытса пымалăх укçа ĕçлесе илес шухăшпа ывăлĕ тусĕсемпе пĕрле Чĕмпĕр облаçĕнчи пĕр хуçалăха выльăх-чĕрлĕх пăхмашкăн кайса вырнаçнă. Тăрăшулăхне хуçалăх ертӳçисем асăрхамасăр хăварман ахăр, ĕçне кура тӳленĕ. Çапла черетлĕ шалу хыççăн, 1993 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнче, çамрăксем Çĕнĕ çул парни-кучченеçĕ туянма Чĕмпĕре çул тытнă. Çул çӳрев вара синкерлĕ çаврăнса тухнă: чукун çул хĕрринче тăракан икĕ каччă пысăк хăвăртлăхпа килекен пуйăса сăнанă. Унччен те пулман, рельс тăрăх пĕр шиксĕр чупакан ачана асăрханă вĕсем. Ашшĕпе амăшĕ вара хулран хул çавăтăнса васкамасăр утнă, тем пирки хĕрӳллĕн калаçнă, çивĕч ыйту сӳтсе явнă ахăр – тĕпренчĕкĕ çинчен пачах шухăшламан.

Пĕчĕкскере çăлса хăварас тесе Толя чукун çул еннелле вирхĕннĕ, ачана инкекрен хăтарнă, хăйне вара упрайман: сулахай алли йывăр кустăрма айне лекнĕ, çурăм шăмми темиçе çĕртен аманнă...

Амăшĕ çирĕплетнĕ тăрăх – тăнсăр выртаканскере хула сыватмăшне ăсатнă, унта çур çул ытла сипленĕ. Ăста тухтăрсем каччă пурнăçне упраса хăварнă, анчах ура çине тăратма хевте çитерейме. Больницăран тухсан тата тепĕр икĕ уйăх Чĕмпĕрти пиччĕшĕ патĕнче чарăнса тăма тивнĕ – сывлăхне тухтăрсем тĕрĕсленĕ. Нушаллă тапхăрта шăллĕ Володя унран пĕр шит те уйрăлман – пиччĕшне пăхнă, çĕнĕлле пурăнма хăнăхтарнă...

### «Чĕре тухса тарас пек тапать...»

Анатолий Пыркин – пĕрремĕш ушкăн инваличĕ хăй тĕллĕн çӳреймест, кӳме уншăн – алă та, ура та. Мĕнле пурăнать вăл паян, кăмăлтуйăмĕ еплерех? – çакна уçăмлатас тĕллевпе Шурут Нурăса çула тухрăмăр. Тĕл пулу пирки малтанхи кунах калаçса татăлнă пулин те пире Афган вăрçин паттăрĕ хăй мар, унăн 82 çулти амăшĕ кăна кĕтсе илчĕ. Пĕр вăхăт сывă пурнăç йĕрки тытса пынă Анатолие çав кун «шуйттан сĕчĕ» ирех урараан ӳкернĕ иккен. Асăннă сăлтавпа хăйĕнпе этем ĕретлĕ калаçма май килмерĕ. Район хаçатĕнчи ĕçтешсенчен ирĕксĕрех пулăшу ыйтма тиврĕ – «Каçал ен» редакторĕ Любовь Шуряшкина унăн кун-çулĕ пирки темиçе материал та пичетлесе кăларнă май вĕсемпе те паллашма тĕв турăмăр.

«...Малтанхипе танлаштарсан Анатолий самаях улшăннă... Урама тухма пуçлани, çынсемпе хутшăнни кăмăлне уçма пулăшнах. ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви нумаях пулмасть ăна кӳмепе тивĕçтернĕ. Икĕ кустăрмаллă «тусĕпе» кăçалхи çу кунĕсенче Толя ял тавра темиçе те çаврăннă, пĕве хĕррине çитсе курнă. «Халĕ манăн килте, тăвата стена хушшинче, ларассăм килмест», – терĕ мана. Шел те хĕл кунĕсенче кӳмешĕн çул хупăнать çав. Афганецсен республикăри союзĕ те манмасть каччăна – компьютер парнеленĕ. Унпа юрă-кĕвĕ итлесе, вăйă выляса вăхăта ирттерме аван.

...Кĕрхи-хĕллехи вăрăм каçсене кĕскетме тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан телевизор пур. Йывăçран касса çӳлĕксем те тăвать хăй. Вĕсем çыпуçăллă пулса тухни арçын чăн-чăн хуçалăх çынни, лайăх мăшăр пулма пултарнине систереççĕ. Юлташĕсем килсех тăраççĕ. Вĕсем унран ютшăнманни, ял-йыш пăрахманни Тольăна вăй-хал парать, пурнăçшăн кĕрешме пулăшать», – çак йĕркесем Любовь Георгиевнăн «Çынсемпе калаçни пурăнма вăй парать» статйинчен илнĕскерсем.



*Шанчăкпа пурăнакан амăшĕ.*

Вăхăт иртнĕ, çулсем малалла шунă май туссем килсе çӳрени ырă витĕм кӳнинех курмарăмăр çав. Пыракансенчен пурне те юлташ теейменс: чылайăшĕн пĕр тĕллев – мухмăр чĕртмелле. Паллах, инвалид пенсийĕ шучĕпе. Ялти лавккасенче /вĕсем темиçе те – район, уйрăм çыннăн/ «фанфурик» йышши шĕвеке ирĕклĕнех сутаççĕ. Анатолий тухса çӳреймест, «тусĕсем» «шуйттан сĕтне» туянма тесен тĕнче хĕррине çитсе килме хатĕр.

Тĕп килте амăшĕпе пĕрле пурăнакан кĕçĕн ывăлĕ Володя Мускав тăрăхне ĕçлемешкĕн тăтăшах çӳренĕ май хуçалăха тытса тăрасси те, сусăра пăхасси те 82 çулти амăшĕ çине тиенет. Чăн та, Анатолие хурласси-тăвасси пулмарĕ унăн. Çапах та: «Чĕре тухса тарас пек тапать», – тенине çине-çинех илтме тиврĕ унран. Апла тăк ăна çăмăл мар. Ĕмĕрне хуçалăхра ĕçлесе ирттернĕ хĕрарăмăн пурнăçне пыл та çу тееймен. Инкек-синкекĕ унран хăпма пĕлмест. Анатолий сусăрланнă хыççăн тăнлавĕ кĕмĕлленчĕ, ун хыççăн икĕ ывăлĕ вăхăтсăр вилсен, упăшки чирлесе пурнăçран уйрăлсан сăн-питне тарăн йĕрсем сисĕнмеллех сухаларĕç. Ура çине тăрайман инвалида ĕçкĕç ретне илĕртни тĕпсĕр çырма хĕррине пырса тăратнипе танах пулнине амăшĕ чунпа туять, анчах инкеке сирмешкĕн, ывăлне çăлса хăвармашкăн ватă çын хăй тĕллĕн пултараймасть. Çакна пускил, ял-йыш курмасть-ши? Кун пек чухне тивĕçлĕ органсене пĕлтермеллине туймастьши?

Афганецсен республикăри союзĕ ăна компьютер парнеленине асăнтăмăр. Çакă, паллах, сăваплă, ку пĕрлĕхĕн районти уйрăмĕн ертӳçи тăтăшах килсе çӳрени – пархатарлă. Вĕсен тивĕçĕ хăйсен организацийĕнче тăракан çыннăн кун-çулне çăмăллатассипе çыхăннă. Çапах компьютер патнех таврăнар-ха: пит кирлех-ши вăл кăçал 46 çул тултарнă арçынна? «Пулă мар, вăлта тыттармалла», – текен каларăш пур. Урăхла каласан ăсталас-каскалас туртăмлă Анатолие инвалида юрăхлă специальноç илме май туса памалла. Кун пек чухне çав кăткăс техника та вырăнлă пулĕччĕ. Чун туртăмĕллĕ çын кăмăлпа çирĕпленет, пурнăç тĕллевне тупать. Пулă тыттарни вара янттине кĕтсе ларма хăнăхтарать.

Афган вăрçин вут-çулăмĕ витĕр тухнă салтак шăпипе сывлăх сыхлавçисен те интересленмелле. Тен, унăн сулахай аллине протезлама май пур? Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенчи йывăрлăхра çапла тума май килмен тейĕпĕр. Хальхи условисенче афганецăн пурнăçне çăмăллатма пулассăн туйăнать. Кӳмине çĕнĕ йышшипе улăштарма та вăхăт çитнĕ. Унсăр пуçне кăмăл-туйăма çирĕплетмешкĕн ятарлă сиплевпе е психолог пулăшăвĕпе тивĕçтерсен ытлашши пулас çук.

Районти социаллă тытăм хастарĕсене Анатолий Пыркинăн малашнехи кун-çулĕ шухăшлаттармалла пек. «Аннесем пур чухне эпир – яланах ачасем», – тетпĕр-ха, çапах вĕсем те ĕмĕр-ĕмĕр вăй питти пулаймĕç, вăхăт çитсен халсăрланĕç, хăйсем хӳтлĕх кĕтĕç. Ун чухне сусăр афганецăн камăн куçĕнчен пăхма тивĕ?

■ **Валентина СМИРНОВА.**

Комсомольски районĕ.

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем

ÇĔНĔЛĔХ

# Пенси валли пухăнакан укçа: паян тата ыран

***2015 çулта обязательнăй пенси страхованийĕ валли пухăнакан взноссене пĕтĕмпех страховани пенсине йĕркелемешкĕн яма палăртаççĕ. Çав укçа-тенкĕ шăпи çинчен паянхи кăларăмра РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн ертӳçи Роза КОНДРАТЬЕВА ăнлантарса парать.***

**– Роза Алексеевна, пенси валли пухăнакан укçа шăпипе çыхăннă ыйту кама ытларах пырса тивет?**

– Пĕрремĕшĕнчен, ĕçлекен граждансене – 1967 çулта тата каярах çуралнисене – вĕсен страховани тата пухăнса пыракан пайсем йĕркеленеççĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, ку енĕпе патшалăхăн шутланман пенси фончĕсен тата управляющи компанисен кăсăкланăвĕ пысăк – пухăнса пыракан пай валли хывнă нухрата вĕсем инвестицилеççĕ, урăхла каласан граждансем çак тĕллевпе куçарнă взноссене ӳстерессишĕн яваплă.

**– Кăçал çав укçана патшалăхăн шутланман фондсене тата управляющи компанисене памарĕç вĕт...**

– Çапла. Ĕçпе тивĕçтерекенсем хăйсем патĕнче тăрăшакансен пулас пенсийĕ валли хывнă взноссене 2014 çулта пĕтĕмпех вĕсен страховани пайне ӳстерме ячĕç е çак тĕллевпе тӳленĕ взноса граждансен Раççей Пенси фондĕнчи счечĕсене куçарчĕç. Вăхăт çитсен страховани пенсине çав суммăна шута илсе палăртаççĕ. Хальлĕхе взноссем паянхи пенсисене тӳлеме каяççĕ. Раççейре пенсипе тивĕçтерес тытăмра тĕп никĕс пулса тăракан пĕр шухăшлăх тĕллевĕ çапла майпа пурнăçа кĕрет.

**– Апла тăк асăннă йĕрке 2015 çулта та сыхланса юлать?**

– Çапла. Пухăнса пыраканни валли 2015 çулта пуçтарăнакан нухрата пулас пенсионерсен страховани пенсине ӳстермешкĕн хывма палăртнă. Патшалăх асăннă пенсие çулленех инфляци шайĕнчен пĕчĕк мар виçепе ӳстерет. Хальхи вăхăтра унăн вăтам сумми пирĕн республикăра 10400 тенкĕпе танлашать.

Пухăнса пыракан пенсие патшалăх индексацилемест, унăн хушăмĕ фондсен тата управляющи компанисен инвестици кăтартăвĕсемпе çыхăннă. 2008 çулхи евĕр çухатусем те сисчĕвлентереççĕ паллах. Кун пек чухне ĕçпе тивĕçтерекен хăй патĕнче вăй хураканшăн тӳленĕ суммăна кăна шантараççĕ.

Çапла вара страховани пенсийĕ пухăнса пыраканнинчен хăвăртрах ӳсет. Пулас пенсионерсен капиталĕпе те çаплах пулса тухать. Пухăнакан укçана инвестициленинчен илнĕ вăтам тупăшпа танлаштарсан страховани пенсийĕ юлашки çулсенче икĕ хут пысăкланчĕ.

**– Çак тĕллевпе 2014 çулччен куçарнă взноссен шăпи мĕнлерех?**

– Граждансен малтан пухăннă укçи пĕтĕмпех сыхланса юлать, хăйсем суйласа илнĕ патшалăхăн шутланман фондсемпе управляющи компанисем ăна инвестицилеççĕ тата çапла майпа илнĕ тупăша пенси палăртнă чухне тĕпе хураççĕ.

**– Çамрăксене тата хĕрĕх çулалла çывхаракан ăрăва 2016 çулччен суйлама сĕнеççĕ: е взноса пухăнса пыракан пенсие йĕркелеме хывмалла, е пĕтĕмпе страховани валли куçармалла...**

– Страховани пенсийĕшĕн патшалăх яваплă, пухăнса пыраканнишĕн – уйрăм компани. Иккĕмĕшне йĕркелени тата укçана финанс рынокне хывни теветкеллĕ пулнине яланах асра тытмалла. Çавна май пулас пенси тата ватлăх кунĕсем пирки тĕплĕн шухăшласа татăклă йышăнăва кашни çыннăн хăйĕн тумалла.

ЫЙТУ-ХУРАВ

## Сусăрлăх тапхăрĕ стажа кĕмест

**Эпĕ – 53 çулта. Йывăр операци хыççăн инвалида тухмалли хутсене хатĕрлетĕп. Пĕтĕмĕшле стаж 32 çултан иртнине шута илсе мана ватлăхри ĕç пенсине маларах кăларма тата инвалидлăх вăхăтне çав стажа кĕртме пултараççĕ-и?**

**И.ИВАНОВА.**

Сире ĕç пенсийĕ памалла тумашкăн иртерех, мĕншĕн тесен 55 çул тултарман. Федерацин 173-мĕш саккунĕн 19 статйипе килĕшӳллĕн инвалидлăх палăртас тăк ку енĕпе ĕç пенсине тивĕçмелли ирĕк пулать. Ăна памалла тумалли вăхăт – инвалидлăх ушкăнне çирĕплетнĕ дата /енчен те çак кунран тытăнса çулталăк иртиччен пенси памашкăн ыйтса çырсан/.

Инвалидлăх пенсийĕн виçи ватлăхрипе параканнинчен базăн çирĕплетнĕ пайĕ тĕлĕшпе уйрăлса тăрать, страховани пайĕ – кашнин хăйне май, мĕншĕн тесен вăл стажпа, шалупа тата страховани взносĕн суммипе çыхăннă.

Иккĕмĕш ушкăнри инвалид пенсийĕн база пайĕ ватлăхра тӳлекеннипе пĕрешкелех – 3910,34 тенкĕ, пĕрремĕш ушкăнрин – 7820,69, виççĕмĕшĕнчин – 1955,17 тенкĕ /федерацин 173-мĕш саккунĕн 15 статйи/.

2002 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пенси виçине страховани взносĕсен суммине кĕртеççĕ. Çавăн пекех пĕтĕмĕшле стажра вăхăтлăх ĕçлемен тапхăра шута илеççĕ, инвалидлăхра пулнă вăхăта вара – çук /çӳлерех асăннă саккунăн 11 статйи/.

## Апат вăхăчĕ

**Эрнере ултă кун 7-шер сехет ĕçлетĕп. Малтан кăнтăр апатланăвĕн вăхăчĕ пурччĕ, халĕ пăрахăçларĕç. Çакă тĕрĕс-и?**

**О.СЕРГЕЕВ.**

Кăнтăр апатланăвĕн вăхăчĕ пулмаллах, çакна валли 30 минутран пуçласа 2 сехет таран уйăраççĕ. Ăна коллективри ĕç йĕркин правилисемпе çирĕплетеççĕ /РФ Ĕçлев кодексĕн 108 статйи/.

Кăнтăр апачĕн вăхăтне пăрахăçлани саккунпа килĕшсе тăмасть, унсăр пуçне сире апатланусăр хăварнипе пĕрлех эрнере 2 сехет ытларах ĕçлеттереççĕ. Тĕрĕссипе ĕç вăхăчĕ çак тапхăрта 40 сехетрен иртмелле мар /РФ Ĕçлев кодексĕн 91 статйи/.

Ертӳçĕн асăннă йĕркене пăхăнса график йĕркелемелле. Енчен те нумайрах ĕçлеттерме тивет тĕк – нормăран ытлашши вăй хуни шутне кĕртсе тӳлеве пысăклатмалла.

Анчах та çапла тумашкăн сирĕнтен ирĕк илмелле. Паллах, çырса. Эсир хирĕçлеме те пултаратăр.

## Саккунпа килĕшсе тăмасть

**2010 çулта упăшка хăйĕн ĕçтешĕнчен гараж туянчĕ. Ун чухне вăл çĕр лаптăкĕ тĕлĕшпе аренда килĕшĕвĕ туман. Халĕ вара ăна сутма шухăшлать, анчах регистраци палати асăннă килĕшӳ пулманнипе сăлтавласа документсене йышăнмасть. Вырăнти хăй тытăмлăх пуçлăхĕ çав килĕшĕве тăвата çул каяллахи датăпа çирĕплетме тата аренда тӳлевне 2010 çулхи ака уйăхĕнчен тытăнса паянхи кунччен тӳлеме сĕнни саккунпа килĕшсе тăрать-и?**

**И.ГАВРИЛОВА.**

Администраци пуçлăхĕн сĕнĕвĕ саккунлă мар, çĕр лаптăкĕн аренда килĕшĕвне иртнĕ вăхăтпа тума юрамасть. Енчен те ăна малтанах йĕркеленĕ тата кадастр учетне тăратнă пулсан харпăрлăха туянас е арендăна илес пирки заявлени памалла. Унпа пĕрле çак документсем пулмалла:

- гараж тĕлĕшпе харпăрлăх прави пуррине Росреестр çирĕплетни;
- хăвăр паспортăн копийĕ;
- çĕр лаптăкĕн кадастр паспорчĕ.

Упăшкăрпа вырăнти администраци аренда килĕшĕвĕ тума килĕшмесен суда тавăç тăратма пултарать. Унта, паллах, гараж йышăнакан лаптăк тĕлĕшпе хăй тытăмлăх пуçлăхне аренда е суту-илӳ килĕшĕвĕ тутарма ыйтмалла /РФ Çĕр кодексĕн 36 статйи/.

АСĂНМАЛĂХ

# Парне – чун туртăмне кура...

Хамăра çывăх та юратнă çынсене çуралнă е ытти паллă кун ячĕпе парнепе чысласси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Эпĕ виççĕмĕш класра вĕреннĕ вăхăтра аннен Шупашкарта пурăнакан аппăшĕ менелникпе тĕслĕ кăранташ пуххипе савăнтарнăччĕ. Асамат кĕперĕн тĕсĕсен хисепне кура шăп çавăн чухлĕччĕ вĕсем курупкăра. Ку парне манăн пуласлăха ырă витĕм кӳнĕ темелле: пионерсен пухăвĕнче стена хаçачĕ кăларакансене суйланă май сăрă кăранташĕсем пуррине кура мана яваплисен йышне кĕртрĕç. Почерк илемлĕччĕ те – текстсене çырма шанчĕç. Хачăк пуçламăш шкулĕ хыççăн Ишлейрине куçсан хамăр ял ачисем сĕннипе каллех редколлегие лекрĕм.

Çил-тăманлă, йĕпе-сапаллă çанталăкра аннен ашшĕ-амăшĕ патне çĕр каçма юлаттăм. Кукаçи, Афанасий Гаврилович Дворников, виçĕ вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнăскер, парти райкомĕн штатĕнче конюх шутланатчĕ. Эпĕ ас тăвасса, 1957-1960 çулсенче чиновниксене пĕр хуçалăхран теприне хальхи пек çăмăл автомашинăпа мар, тăрантаспа е хӳтлĕхлĕ çунапа илсе çӳренĕ. Çак тивĕçе те кукаçи пурнăçланă, çавна май шалусăр пуçне уншăн та пысăках мар тӳлеве тивĕçнĕ. Çавăнпа мана кино курма е пĕр-пĕр япала туянса памашкăн енчĕкĕнче кирек хăçан та нухрат тупăнатчĕ. Пиллĕкмĕш класра йĕлтĕр парнелерĕ, улттăмĕшĕнче кукамай: «Ачи япăх вĕренмест, аслă мăнука парнепе савăнтармаллах», – тенине шута илсе çитĕннисем валли кăларнă велосипед туянса пачĕ. «Тимĕр урхамахпа» вăтам шкул пĕтертĕм, райхаçата вырнаççан ялтан яла çӳресе статьясем хатĕрлерĕм, кукаçи парнеленĕ «Смена-8» фотоаппаратпа вун-вун сăн ӳкерчĕк турăм.

Унччен маларах, вун пĕрмĕш класра вĕреннĕ чухне, чăвашла ирĕклĕ темăпа сочинени çырса конкурсра мала тухнăшăн шкул директорĕ Г.Павлов шахмат парнелерĕ, «Корреспондентра ĕçлес пулсан командировкăна çӳренĕ вăхăтра выляма кирлĕ», – терĕ. Шел, пушă самант пулмарĕ, шахмат вăййине вĕренеймерĕм.

Хаçат редакцийĕсенче ĕçленĕ хушăра çичĕ-сакăр фотоаппарат улăштартăм, хăй вăхăтĕнче хаклă шутланнă «Зенита» тимсĕрлĕхпе çухатрăм. ЧР ШĔМне ертсе пынă В.Антонов парнеленине вара паян кун та упратăп, килти фотолабораторире тытатăп.

Çак аса илĕве Шупашкар район хаçачĕн «Тăван ен» тесе çырнă ручкипе шăрçаларăм – ăна мана унăн редакторĕ асăнмалăх парнеленĕччĕ.

■ **Александр МОКИН.**

Шупашкар хули

**Кăларăма Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

